25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАЙ 20 ВЫРСАРНИКУН 96(6847) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Республика юбилейне тивӗҫлипе кӗтсе илер!

Тепӗр уйӑхран, июнӗн 24-мӗшӗнче, Чӑвашсен Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республики 25 ҫул тултарать. Республика 25 ҫул тултарни—чӑваш халӑхӗн пысӑк уявӗ.

Республика юбилейӗ халӑхшӑн савӑнӑҫлӑ вӑхӑтра, юнлӑ вӑрҫӑ пӗтнӗ, мирлӗ пурнӑҫ пуҫланнӑ вӑхӑтра килет. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем халӗ нихӑҫанхи пек мар пысӑк ҫӗкленӳпе пурӑнаҫҫӗ. Германие ҫӗнтернӗ аслӑ кун ҫитнӗ ятпа И. Сталин юлташ халӑха чӗнсе калани ҫине ответлесе, вӗсем хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршыва тата хӑватлӑрах та пуянрах тӑвассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеҫҫӗ.

Ӗҫри ҫакӑн пек пысӑк ҫӗкленӳ пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем хушшинче те палӑрать. Республикӑри рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем тата служащисем хушшинче Чӑваш автономийӗ 25 ҫул тултарнине ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать.

Ӑмӑрту вӑл—пысӑк вӑй. Ӑна кирлӗ пек йӗркелесе ертсе пыма пултаракансем производствӑра пысӑк ҫитӗнӳсем тӑваҫҫӗ. Республика 25 ҫул тултарнӑ ятпа ӑмӑрту пуҫаракан Ҫӗмӗрле комбиначӗн коллективӗ апрель уйӑхӗнчи производство программине срокчен тултарчӗ, планран ирттерсе сахал мар продукци туса кӑларчӗ. Комбинат коллективӗ май уйӑхӗнче те лайӑх ӗҫлет, кулленхи графика пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пырать.

Канашри вагонсем юсакан завод та республика юбилейӗ ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыҫҫӑн ӗҫре улшӑну турӗ. Хӗллехи уйӑхсенчи плана тикӗс мар тултарса пынӑ пулсан, март уйӑхӗнче раснах лайӑх ӗҫлерӗ. Ҫавӑншӑн ВЦСПС-па Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Завод коллективӗ халӗ ҫак ялава алӑран вӗҫертес мар тесе кӗрешет. Коллектив иртнӗ уйӑхри плана та ӑнӑҫлӑн тултарчӗ.

Якунин, Челноков юлташсем главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводсем те, чӑваш халӑх уявне кӗтсе илме хатӗрленнӗ май, ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе палӑртмалла. Ҫак заводсем апрельри производство планӗсене срокчен пурнӑҫа кӗртрӗҫ.

Пирӗн республикӑри вӑрман хатӗрлевӗнче ӗҫлекенсем тата ҫак ӗҫе мобилизациленӗ колхозниксем, колхозницӑсем уйрӑмах пысӑк ҫитӗнӳ турӗҫ. Чугун ҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлемелли плана иртнӗ сезонра ӑнӑҫлӑн тултарнӑшӑн пирӗн республикӑна Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата 250 пин тенкӗ преми пачӗҫ.

Промышленноҫпа транспортри социализмлӑ ӑмӑртура тунӑ ҫитӗнӳсем пысӑк. Анчах та пирӗн лӑпланса лармалла мар. Республикӑри промышленноҫпа транспорт ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те пур-ха. Ҫитменлӗхсем уйрӑмах вырӑнти тата кооперации промышленность предприятийӗсемпе артелӗсенче нумай. Ҫак промышленноҫсен чылай предприятийӗсемпе артелӗсем хӑйсен ӗҫ планне уйӑхран уйӑха тултарса пымаҫҫӗ, социализмлӑ ӑмӑртура начар ӗҫлеҫҫӗ. Партипе правительство Чӑваш автономийӗ 25 ҫул тултарнине кӗтсе илес пирки чӗнсе каланине районсенчи хӑшпӗр промкомбинатсемпе артельсенче кирлӗ пек сӳтсе-явман.

Вырӑнти тата кооперации промышленность предприяти руководителӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑва лайӑхрах йӗркелесе ертсе пымалла. Республика 25 ҫул тултарнӑ ятпа пыракан ӑмӑрту тулашӗнче пӗр рабочи те, пӗр алӑстаҫ та пулмалла мар. Ҫак ӑмӑрту чӑннипех те мӗнпур ӗҫҫыннисен ӑмӑртӑвӗ пулса тӑмалла!

Республика юбилейӗ ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑрту промышленноҫпа транспортра кӑна мар, ялхуҫалӑхӗнче те сарӑлса кайрӗ. Пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем кӑҫалхи ҫуракине вӑхӑтра тата лайӑх туса ирттерессишӗн, пур тырӑсене те планпа палӑртнӑ чухлех акса хӑварассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Майӑн 15-мӗшӗ тӗлне республика ҫураки планне пӗтӗмпе 71 процент тултарчӗ. Малта пыракан чылай районсем тӗштырӑсемпе пӗр ҫул ӳсекен курӑксене акса пӗтерчӗҫ. Вӑрнар, Сӗнтӗр, Советски, Ҫӗрпӳ, Муркаш, Чурачӑк, Красноармейски тата ытти районсенчи нумай колхозсем ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем лартма тытӑнчӗҫ.

Чӑваш халӑхӗн уявне тивӗҫлипе кӗтсе илессишӗн кӗрешсе, кӑҫал пирӗн республикӑри машинӑпа трактор станцийӗсем те пӗлтӗрхинчен лайӑхрах ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрнар, Шӑхасан, Ҫӗрпӳ, Красноармейски, Куславкка тата Йӗпреҫ МТС-ӗсем тракторсемпе ҫураки вӑхӑтӗнче тумалли ӗҫсен планне тултарчӗҫ.

Анчах та малта пыракан районсемпе МТС-сем лайӑх ӗҫленипе кӑна республикӑри ҫуракин пӗтӗм ӑнӑҫлӑхне татса пама ҫук. Ҫураки планне кашни районпа МТС-ӑн, колхозпа совхозӑн, бригадӑпа звенон тултармалла, кашни тыррах планпа пӑхнӑ чухлӗ тата агротехника вӗрентнӗ пек акса хӑвармалла. Ҫурхи ака ӗҫне юлса пыракан Первомайски, Пӑрачкав, Улатӑр, Ҫӗмӗрле тата Йӗпреҫ районӗсенче хӑвӑртлатмалла. Вӗсен, ӗҫе хӑвӑртлатасси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхса, пахалӑх ҫинчен те манмалла мар. Хӑвӑрт та лайӑх акмалла, агротехника хушнине тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пымалла.

Юлса пыракан районсемпе колхозсен, ҫураки планне пӗтӗмпех тултарас тесен, мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене, ҫамрӑккисенчен пуҫласа ваттисем таранах, ака-суха ӗҫне хутшӑнтармалла, уйхирте ӗҫлекенсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе, социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатмалла. Кашни колхозникпа колхозницӑ хӑйӗн кулленхи нормине ытлашшипех тултартӑр! Унсӑр пуҫне ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур машинӑсене, чӗрӗ туртӑм вӑйне май килнӗ таран тухӑҫлӑрах ӗҫлеттермелле.

Пирӗн республикӑри ялхуҫалӑх работникӗсем, колхозниксемпе колхозницӑсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ҫуракисене начар мар ирттерчӗҫ. Кӑҫалхи ҫураки иртнӗ ҫулхи ҫуракисенчен нумай енпе уйрӑлса тӑрать. Кӑҫалхи ҫуракине эпир вӑрҫӑ чарӑннӑ хыҫҫӑн мирлӗ пурнӑҫ пуҫланнӑ тапхӑрта, Чӑваш республики 25 ҫул тултарас умӗн ирттеретпӗр. Кӑҫалхи ҫуракине ытти ҫулхисенчен чылай лайӑх ирттерсе, ҫӗнтерӳ ҫулӗнчи тырпул никӗсне хывса хӑварар, чӑваш халӑхӗн уявне вӑйлӑ тырпул ӳстернипе кӗтсе илер!

Колхозсенче вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешнипе пӗрлех выльӑх-чӗрлӗх йышне, унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе те нумай ӗҫлемелле. Иртнӗ ҫулта пирӗн республика выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе государство панӑ плана пурнӑҫа кӗртеймерӗ; колхозсенче пур тӗрлӗ выльӑхсен йышӗ те чылай чакрӗ. Ҫавӑнпа пирӗн ялхуҫалӑх работникӗсем умӗнче халӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Чималтанах, ҫак ӗҫре халиччен пулнӑ ҫитменлӗхсене пур ҫӗрте те пӗтерес пулать, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ялхуҫалӑх работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ илнӗ обязательствӑсене пӗтӗмпех пурнӑҫламалла. Ҫамрӑк выльӑхсене пурне те тӗрӗс-тӗкел пахса ӳстермелле, выльӑх-чӗрлӗхрен ытларах тупӑш илмелле, выльӑх апатне ҫителӗклӗ хатӗрлесе хӑвармалла, витисене ҫӗнӗрен тумалла, юсамалла.

Республика юбилейне кӗтсе илме хатӗрленес ӗҫре хуласемпе район центрӗсене, ҫулйӗрсене юсаса илемлетес ӗҫ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Халӑх уявне илемлӗ хуласемпе ялсенче ирттермелле, пирӗн пата килекен хӑнасене лайӑх ҫулсем ҫинче кӗтсе илмелле пултӑр.

Анчах та республикӑра хуласемпе район центрӗсене юсаса йӗркелес ӗҫ ҫителӗксӗр пырать-ха. Ку тӗлӗшпе Шупашкар хулинче, Муркаш райцентрӗнче ытти ҫӗртинчен тимлӗнрех ӗҫленине курма пулать. Чылай хуласемпе район центрӗсенче вара ҫак ӗҫе хакламаҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ палӑртнӑ тӑрӑх, майӑн 25-мӗшӗпе июнӗн 15-мӗшӗ хушшинче республикӑра ҫулйӗрсене юсаса илемлетмелли ҫирӗмкунлӑх пулать. Ҫак вӑхӑтра республикӑри ҫулсемпе кӗперсене юсаса тухмалла, ҫӗнӗрен те тумалла. Унпа пӗрлех ҫулсене йывӑҫсем лартса илемлетмелле.

Вырӑнти партипе совет организацисен, хуҫалӑх руководителӗсен хуласемпе район центрӗсене тата ҫулйӗрсене юсаса йӗркелес, вӗсене йывӑҫсем лартса илемлетес ӗҫпе ытларах интересленмелле, ҫав ӗҫе ӗҫҫыннисемпе шкул ачисене анлӑнрах хутшӑнтармалла.

Культурӑпа наука, искусствӑпа литература работникӗсем умӗнче те пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен, спорт организацийӗсен ӗҫне вӑйлатмалла, халӑхӑн художествӑллӑ пултарулӑхне анлӑнрах кӑтартмалла. Совет писателӗсен чӑваш халӑхне уяв тӗлне ҫӗнӗ произведенисем памалла, театр работникӗсен лайӑх постановкӑсем кӑтартмалла.

Чӑваш халӑхӗн аслӑ уявӗ ҫывхарать. Уява хатӗрленсе ҫитес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем нумай-ха. Юлнӑ вӑхӑтпа туллин усӑ курса, 2—3 хут ытларах вӑй хурса ӗҫлесе, промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗнче, культурӑпа ҫутӗҫ ӗҫӗнче ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвар, уява тивӗҫлипе кӗтсе илер!

Совет Союзне Югослави Посолӗ В. Попович господин килнӗ

Майӑн 16-мӗшӗнче Мускава Югославин Совет Союзӗнчи Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ В. Попович господин килнӗ.

Центральнӑй аэродромра В. Попович господина ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: СССР Наркоминделӗн Протокол отделӗн Заведующийӗн ӗҫӗсене туса тӑракан Б. И. Фомин, Югославин Ӗҫри Повереннӑйӗ Р. Николаевич, Югославин Совет Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Р. Приморац генерал-лейтенант, ҫавӑн пекех тата Югослави Правительствин ҫул май Мускава кӗнӗ Финанс Министрӗ С. Жуэвич господин кӗтсе илнӗ. (ТАСС).

АНГЛИРИ „ТАЙМС" ХАҪАТӐН КОРРЕСПОНДЕНЧӖ ҪЫРНӐ ҪЫРУ ПИРКИ

И. В. СТАЛИН ЮЛТАШ ПАНӐ ОТВЕТ

Англири „Таймс" хаҫатӑн корреспонденчӗ ҫырнӑ ҫыру

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председательне И. В. Сталина

МУСКАВ.

Ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларчӗҫ: ТАСС мунамах та пулмасть пӗлтернӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫарӑн тылӗнче диверсиллӗ ӗҫсем организацилесе пурнӑҫа кӗртнӗшӗн айӑпласа арестленӗ темиҫе поляк, чӑннипе илсен, совет влаҫӗсемпе калаҫма чӗннӗ делегацин членӗсем пулнӑ, имӗш. Ҫавӑн пекех тата хаҫатсем ҫапла калаҫҫӗ: поляксен ҫав ушкӑнне демократиллӗ шухӑшлӑ пуҫлӑхсем кӗреҫҫӗ, Польшӑн пулас вӑхӑтлӑх правительствине тӑвасси пирки вӗсем шухӑшлани ҫавӑн пек правительство тӑвас ӗҫре питӗх те хаклӑ пулнӑ пулӗччӗ, терӗҫ. Ҫӳлте асӑннӑ поляксене арестлесе, Совет правительстви Крымра туса хатӗрленӗ мероприятисене ӗненсе тӑрассине хавшатать тата Польшӑн ҫӗнӗ вӑхӑтлӑх правительствине тӑвас ӗҫе чӑрмав кӳрет, тесе пӗлтерчӗҫ ют ҫӗршывсенче.

Ҫак ыйтупа интересленекен обществӑллӑ шухӑш усӑмлӑ ӑнлантӑр тесе, Эсир ҫак ыйту пирки каласа пама кӑмӑл тумӑр-и?

Сире хытӑ хисеплесе **РАЛЬФ ПАРКЕР.**

Мускав, 1945 ҫулхи майӑн 11-мӗшӗ.

Англири „Таймс" хаҫатӑн корреспондентне Паркер господина панӑ ответ

Эпӗ ответа кӑштах кая юлса паратӑп, анчах та манӑн ӗҫ нумайӑшне шута илсен, ҫакна ӑнланма пулать.

1. Паллӑ диверсант Окулицкий генерал пуҫ пулса тӑракан вунултӑ поляка Польшӑра арестлени Польшӑн Вӑхӑтлӑх Правительствине урӑхлатса ҫӗнетес ыйтупа нимӗнле те ҫыхӑнса тӑмасть. Ҫав господинсене Хӗрлӗ Ҫарӑн тылне диверсантсенчен сыхласси ҫинчен калакан закон тӑрӑх арестленӗ, ҫав закон Англире государствӑна сыхласа тӑрасси ҫинчен кӑларнӑ законпа пӗр пекех. Кунсӑр пуҫне, ҫав поляксене совет ҫар влаҫӗсем арестлени Польшӑн Вӑхӑтлӑх Правительствипе Советӑн ҫар командованийӗ хушшинче тунӑ килӗшӳпе килӗшсе тӑрать.

2. Арестленӗ поляксене совет влаҫӗсемпе калаҫма чӗннӗ пулнӑ тесе калани тӗрӗс мар. Хӗрлӗ Ҫарӑн тылне сыхласси ҫинчен калакан закона пӑсакансемпе совет влаҫӗсем калаҫмаҫҫӗ тата калаҫмӗҫ те.

3. Польшӑн Вӑхӑтлӑх Правительствине урӑхлатса ҫӗнетес ыйтӑва хӑйне илес пулсан, ӑна вара Крымра йышӑннӑ постановленисем тӑрӑх кӑна татса пама пулать, мӗншӗн тесен ҫав постановленисенчен мӗнле те пулин каялла чакни пулмалла мар.

4. Польша ыйтӑвне ҫак питех те кирлӗ условисене пӑхӑнсан кӑна союзниксем хушшинче килӗштерсе татса пама пулать, тесе шутлатӑп эпӗ:

А) Польшӑн Вӑхӑтлӑх Правительствине урӑхлатса ҫӗнетнӗ чухне ӑна, Югославире тунӑ чухнехи пек, Польшӑн пулас Нациллӗ Пӗрлӗх Правительствин тӗп чӑмӑрӗ вырӑнне хурса йышӑнсан (Югославире Нацин Ирӗклӗх Комитетне Югославин Пӗрлешӳллӗ Правительствин тӗп чӑмӑрӗ вырӑнне хурса йышӑннӑ пулнӑ);

В) урӑхлатса ҫӗнетнӗ хыҫҫӑн Польшӑра Совет Союзне хирӗҫ «санитари кордонӗ» туса хурас политикӑна мар, Совет Союзӗпе туслӑ пурӑнас политикӑна тытса пыракан правительство пулса тӑрас пулсан;

С) Польшӑн Вӑхӑтлӑх Правительствине урӑхлатса ҫӗнетес ыйтӑва хальхи вӑхӑтра Польша халӑхӗпе ҫыхӑнса тӑракан поляксемсӗр мар, вӗсемпе пӗрле татса парас пулсан.

Сире хисеплесе **И. СТАЛИН.**

1945 ҫулхи майӑн 18-мӗшӗ.

СССР Совнаркомӗнче

А. С. Щербаков ятне ӗмӗрлӗхе упраса хӑварасси тата унӑн ҫемьине пулӑшу парасси ҫинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. Мускав хулинче Александр Сергеевич Щербакова памятник лартас.

2. Мускав хулинчи Ростокино районне малалла Щербаков районӗ темелле тӑвас.

3. А. С. Щербаков ячӗпе ҫакӑн пек стипендисем памалла тӑвас:

а) Мускаври М. В. Ломоносов ячӗпе тӑракан Государство университетӗнче — истори факультетӗнче отлично вӗренекен студентсене 400-шер тенкӗлӗх висӗ стипенди;

б) Иркутскри А. А. Жданов ячӗпе тӑракан Государство университетӗнче — филологи факультетӗнче отлично вӗренекен студентсене 400-шер тенкӗлӗх висӗ стипенди.

4. А. С. Щербаков юлташӑн арӑмне Вера Константиновна Пестроуховӑна пӗр вӑхӑтлӑха 200.000 тенкӗ пособи парас тата А. С. Щербаков юлташӑн амӑшне Александра Петровна Щербаковӑна 50.000 тенкӗ парас.

5. А. С. Щербаков юлташӑн семьине ҫакӑн пек персональнӑй пенси памалла тӑвас:

Унӑн арӑмне Вера Константиновна Пестроуховӑна мӗн виличченех уйӑхне 2.000 тенкӗ;

Унӑн ывӑлӗсене Александра, Константина тата Ивана — вӗренсе тухиччен кашни уйӑхра пӗрер пин тенкӗ;

Унӑн амӑшне Александра Петровна Щербаковӑна — мӗн виличченех уйӑхне 700-шер тенкӗ.

Унӑн йӑмӑкне Капитолина Сергеевна Белуконисна—мӗн виличченех уйӑхне 300-шер тенкӗ.

ВЦСПС-ра

Майӑн 18-мӗшӗнче ВЦСПС президиумӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Ларура профсоюзсен Центральнӑй Комитечӗсен президиумӗсен председателӗсемпе секретарӗсем тата членӗсем те пулнӑ. Ларура Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен Администраци комитечӗн ӗҫӗсем ҫинчен ВЦСПС председателӗ В. В. Кузнецов юлташ доклад туса панӑ.

ВЦСПС президиумӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗн Администраци комитечӗ Вашингтонпа Сан-Францискӑра 1945 ҫулхи апрелӗн 13-мӗшӗпе майӑн 4-мӗшӗ хушшинче тунӑ ӗҫсем ҫинчен тата ҫав комитет профсоюзсен Пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн уставӗн проектне ҫирӗплетни ҫинчен В. В. Кузнецов юлташ каласа паннине асра тытас.

2. ВЦСПС секретариатне 1945 ҫулхи май уйӑхӗпе июнь уйӑхӗнче профсоюзсен Пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн уставӗн проектне Центральнӑй Комитетсем сӳтсе-явас ӗҫе организацилеме тата вӗсем сӳтсе-явнин итогӗсене пӗтӗҫтерсе, ВЦСПС президиумне пӑхса тухма тӑратма хушас. (ТАСС).

Рабочисемпе служащисене вӗсем хӑйсен пахчисенче пысӑк тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫ туса илнӗшӗн премилеме— 300.000 тенкӗ укҫа

ВЦСПС секретариачӗ 1945 ҫулта рабочисемпе служащисен уйрӑм тата коллективлӑ пахчисенче пысӑк тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫ туса илнӗшӗн профсоюз организацийӗсемпе пахча комиссийӗсене премилеме укҫа уйӑрса хунӑ. Куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавсене, ВЦСПС грамотисене тата укҫан тӳлемелли премисене кашни тӑваткал метр ҫӗр ҫинче 3 килограмм ҫӗрулми, 5 килограмм купӑста, 4 килограмм чӗкӗнтӗрпе кишӗр, 2 килограмм сухан туса илекен профорганизацисемпе пахча комиссийӗсене памалла тунӑ.

Украина, Молдави, Грузи, Азербайджан, Армян ССР-ӗсенчи тата Вӑтам Азири республикӑсенчи профсоюз организацийӗсемпе пахча комиссийӗсене те рабочисемпе служащисен уйрӑм тата коллективлӑ пахчисенче пысӑк тухӑҫлӑ кукуруза, рис тата пӑрҫа йышши культурӑсем туса илнӗшӗн ВЦСПС-ӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене, грамотисене тата укҫан тӳлемелли премийӗсене илме право панӑ.

Пысӑк тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫ туса илнӗшӗн премилеме 300.000 тенкӗ укҫа уйӑрса хунӑ. Вӑл премисене ҫулталӑк пӗтнӗ чухне параҫҫӗ. (ТАСС).

ВКП(б) Обкомӗнче

Ҫулйӗр строительствин ҫирӗмкунлӑхне ирттересси ҫинчен

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ кӑҫалхи майӑн 25-мӗшӗпе июнӗн 15-мӗшӗ хушшинче ҫулйӗр строительстви енӗпе ҫирӗмкунлӑх ирттерме йышӑннӑ.

Ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче ҫӗнӗ ҫулсем тумалла, киввисене юсамалла, государствӑн, республикӑн, районсен ҫулйӗрӗсемпе кӗперӗсене юсаса илемлетмелле тата вӗсем ҫинче культурӑллӑ йӗрке тумалла.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Горький хулипе Хусан хушшинчи ҫулӑн начальникне Лазутин юлташа тата Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ҫулйӗр Управлени начальникне Галанцев юлташа, кашни районра ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче мӗн тумаллине кӑтартса, висӗ кунлӑ срокра конкретнӑй заданисем палӑртма тата вӑл заданисене районсем патне ҫитерме хушнӑ.

Ҫирӗмкунлӑха ирттерес ӗҫе ертсе пыма кашни хулапа районра штабсем тумалла, вӗсен председателӗсем—район (хула) Совечӗсен исполком председателӗсем пулмалла.

Республикӑра ҫулйӗр строительствинче ҫирӗмкунлӑх ирттерес ӗҫе ертсе пыма ВКП(б) Обком секретарӗн промышленноҫпа транспорт енӗпе ӗҫлекен заместительне Репкин юлташа хушнӑ.

Республикӑри хаҫатсемпе районсенчи хаҫатсен редакторӗсене ҫулйӗр строительствинчи ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче ӗҫ мӗнле пынине хаҫатсен страницисенче анлӑн ҫутатса тӑма хушнӑ.

ВКП(б) горкомӗсемпе райкомӗсене ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче ҫулйӗр строительстви енӗпе панӑ плана срокчен пурнӑҫа кӗртессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарса яма хушнӑ. Ӑмӑртура мала тухакан района пама Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обком бюровӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тунӑ.

Государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукцийӗ срокчен парса татар!

(Вӑрмар районӗнчи „Красная Кубня" колхоз членӗсен ҫырӑвӗ)

Пирӗн урама та аслӑ уяв, ҫӗнтерӳ уявӗ, пирӗн тӗрӗс ӗҫ ҫӗнтерӳн уявӗ ҫитрӗ. Пирӗн чӗресем савӑнӑҫпа тулса тӑраҫҫӗ. Пирӗн геройлӑ Хӗрлӗ Ҫар фашистла Германие аркатса тӑкрӗ. Пирӗн халӑх ҫӗнтерӳ пире уй-хирсенче, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ырми-канми ӗҫлеме хавхалантарать. Хамӑр Тӑван ҫӗршыва гитлерла вӑрӑ-хурахсем кӳнӗ сурансенчен сыватассишӗн эпир Хӗрлӗ Ҫара тата ҫӗршыва ытларах та ытларах пулӑшас кӑмӑлпа ҫунса тӑратпӑр.

Гитлерла Германие аркатса тӑкнӑ май Ҫӗнтерӳ Кунне уявлама пухӑннӑ пухура эпир хамӑрӑн фронтран таврӑнакан ҫывӑх ҫыннӑмӑрсене колхоз хуҫалӑхӗнче татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме йышӑнтӑмӑр. Фронтовиксем тӑван колхоза таврӑнсан: Матур, колхозниксем! —теме пултарччӑр. Ҫураки ӗҫӗсене пирӗн колхоз ӑнӑҫлӑн вӗҫлесе пырать. Эпир хамӑр умма Чӑвашсен Социализмлӑ Советлӑ Республики 25 ҫул тултарнӑ тӗле выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне пӗтӗмпех пурнӑҫлас задача лартрӑмӑр. Кашни сӑвакан ӗнерен 1.500 литртан кая мар сӗт суса илес тетпӗр. 100 ӗнерен 90 пӑру, 100 сурӑхран 120 путек, кашни сысна аминчен 10 ҫурӑран кая мар илсе пӑхса ҫитӗнтерме пулатпӑр. Государствӑна аш-какай тата сӗт-ҫу памалли плана республика 25 ҫул тултарнӑ тӗле тултарма пулатпӑр. Унсӑрӑн пуҫне, Хӗрлӗ Ҫарӑн Ҫӗнтерӳ фондне колхоз фермисенчи кашни сӑвакан ӗнерен 150 литр, ӗнеллӗ колхозник хуҫалӑхӗнчен 50 литршар сӗт пама пулатпӑр. Пурӗ пӗтӗм колхозӗпе 10.000 литр сӗт Хӗрлӗ Ҫарӑн Ҫӗнтерӳ фондне паратпӑр. Ҫак обязательствӑна эпир Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 28 ҫул тултарнӑ тӗле пурнӑҫлама пулатпӑр.

Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстерес шутпа, эпир выльӑх апачӗ нумайрах хатӗрлеме йышӑнтӑмӑр. Выльӑхсене кирлӗ пулакан апатсене хире акнисӗр пуҫне, эпир выльӑхсем валли сӗткенлӗ апат 11.5 гектар ферма ҫумӗнчи участока акатпӑр. Ҫак лаптӑка пирӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекенсем ҫӗрулми лартаҫҫӗ, выльӑх кӑшманӗ, кишӗр, кавӑн, хӗвелҫаврӑнӑшӗ тата ыттине те акаҫҫӗ. Ӗнесене ҫулла кӗтӳре ҫӳретнӗ чухне сулса ӗҫӗл апат ҫитерес шутпа, ферма ҫывӑхӗнчи выльӑхсене усӑлтарса ҫӳретмелли вырӑна тата итем вырӑнӗсене эпир сӗлӗпе вика акатпӑр. Выльӑхсене кӗтӳре ҫӳретмелли 30 гектар ҫӗре эпир тислӗк шӗвекӗпе тата кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗпе апатлантартӑмӑр. Кӗтӳ вырӑнӗсемпе улӑхсене пӗтӗмпех ҫӳрерӗмӗр, тӗрлӗ ҫӳп-ҫапран, йывӑҫ тӗмӗсенчен, выльӑх ҫимен юрӑхсӑр курӑксенчен тасататпӑр, тӗрлӗ тӗмсене касса тикӗслетпӗр.

Сӑвакан ӗнесенчен ытларах сӗт илес шутпа, ҫуллахи вӑхӑтра ӗнесене кӗтӳре тытас вӑхӑта тӑсатпӑр. Пирӗн ӗнесем кӗтӳре талӑкра 18 сехетрен кая мар пулаҫҫӗ. Пирӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗнче ӗҫлекенсем ӗнесене талӑкра висӗ хут сӑваҫҫӗ, нумай хутчен шӑвараҫҫӗ. Мӗнпур выльӑхсене, вӑл шутра лашасене те, силос паратпӑр. Эпир силос мӗн тери паха апат пулса тӑнине практикӑра куртӑмӑр. Ҫавӑнпа та кӑҫал ҫулла эпир 150 тоннӑран кая мар силос хывса хӑварма йышӑнтӑмӑр. Силос хывас ӗҫре эпир акнӑ курӑксемпе тата хӗвелҫаврӑнӑшӗпе кӑна мар, хӑй тӗллӗн ӳсекен курӑксемпе те анлӑн усӑ куратпӑр. Пирӗн колхозра кашни ҫулах выльӑхсем валли хупса ҫитермелли апат хатӗрлеҫҫӗ. Сӑмахран, пахчасене сыснасем валли вӗлтрен, сурӑхсем валли арӑмути, путексем валли йывӑҫ милӗкӗсем хатӗрлеҫҫӗ. Унсӑр пуҫне, ҫамрӑк выльӑхсем валли симӗс вӑхӑтра ир ҫулнӑ утта витаминлӑ апат тума хатӗрлетпӗр. Витаминлӑ уттӑн пӗр пайне тӗштырӑсемпе хутӑштарса аварӗса, выльӑхсем валли ҫав тери паха посыпка хатӗрлетпӗр.

Выльӑхсем кӗтӳре ҫӳренӗ вӑхӑтпа усӑ курса, эпир выльӑх-чӗрлӗх ҫуртйӗрӗсене юсатпӑр тата ӑшӑ каймалла мар тӑватпӑр. Халӗ эпир ӗне фермине пӑрусамалли пӳлӗм тата чирлӗ выльӑхсене хупса усрамалли изолятор тӑватпӑр.

Выльӑх-чӗрлӗхсен кашни ҫуртйӗрне тимлӗн тасататпӑр, шалтан та тултан та шурататпӑр. Кашни фермӑрах тата витесенче те выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекенсем шалти йӗркен правилисене пӑхӑнса ӗҫлеҫҫӗ, зоотехникӑпа ветеринари правилисене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Ҫак мероприятисене колхозра лайӑх пурнӑҫласа пырсан, пирӗн пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх татах та ҫирӗпленессе эпир шанса тӑратпӑр. Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе эпир тӑвакан ӗҫсене пур колхозсем те тума пултараҫҫӗ пулӗ, тесе шутлатпӑр. Вӗсене пурнӑҫлани государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра парса татма тата пирӗн ҫӗршыва ытларах та ытларах ялхуҫалӑх продукчӗсем парса тӑма май парать.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлӑлатмалли 1945 ҫулхи план ҫинчен» йышӑннӑ постановление пӗтӗмпех пурнӑҫласси — пирӗн орденлӑ Чӑваш республикинчи кашни колхозӑн хисеплӗ задачи пулса тӑрать.

«Красная Кубня» колхоз председателӗ Ф. Е. САПАРКИН.
Колхозри пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Ю. С. БОНДАРЕВА.
Колхозра лашасем ӗрчетес ӗҫӗн заведующийӗ С. ИСВАТОВ.
Колхозри фермӑсен заведующийӗ Я. СТЕПАНОВ.
Колхоз бригадирӗсем: В. АНДРЕЕВ, Ф. САПАРКИН, А. ДЕМЬЯНОВ, И. ПЕТРОВ.
Ферма работникӗсем: М. СЕМЕНОВА, А. ИВАНОВА, М. НИКОЛАЕВА, П. СИНИЧКИНА, П. МОРЯКОВ.
Колхозниксем: Г. ИВАНОВ, И. НИКИТИН, А. ЧЕСНОКОВА, П. АНДРЕЕВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗнче США Посолӗ пулса ӗҫленӗ Джозеф И. Дэвиса Ленин орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Совет Союзӗпе Америка хушшинчи туслӑ ҫыхӑнусене ҫирӗплетес тӗлӗшпе тата ҫав ҫӗршывсен халӑхӗсем пӗр-пӗрне ӑнланса пӗрне-пӗри шанассине ӳстерес тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн Джозеф И. Дэвиса Ленин орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи майӑн 18-мӗшӗ.

П. И. Чайковский ҫуртне-музейне уҫни

Клин хулинче П. И. Чайковский ҫуртне-музейне уҫнӑ. Ҫав ҫурта-музее нимӗҫ оккупанчӗсем 1941 ҫулта пӗтӗмпех аркатса тӑкнӑ пулнӑ, ӑна халь юсаса ҫитернӗ.

ХИСЕП ХӐМИ

Ёҫсыннисен депутачӗсен райсоветӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, суракиниче тухӑҫлӑн тата лайӑх ӗҫленӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

ЧУРАЧӐК РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

22. Шуркасси ял Советӗнчи «Первое мая» колхоз (председателӗ Александров юлташ). Колхоз агротехникӑн пур мероприятийӗсене те пурнӑҫласа, тӗштырӑсене 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

23. Кушкӑ ял Советӗнчи «Шуматар» колхоз (председателӗ Ильин юлташ). Колхоз агротехника енчен лайӑх пахалӑхпа тӗштырӑсене 8 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

24. Тӗрер ял Советӗнчи «Калиновка» колхоз (председателӗ Матвеев юлташ). Колхоз суракине лайӑх хатӗрленсе тухнӑ, агротехника мероприятийӗсене пӗтӗмпех пурнӑҫласа, тӗштырӑсене 8 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

25. Тӗрер ял Советӗнчи «Правда» колхоз (председателӗ Корнилов юлташ). Колхоз агротехника мероприятийӗсене пурнӑҫласа, тӗштырӑсене 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

26. Тӗрер ял Советӗнчи «Красная Чувашия» колхоз (председателӗ Хрисанфов юлташ). Колхоз 62 гектар тӗштырӑсене агротехника енчен лайӑх пахалӑхпа 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

27. Метикасси ял Советӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Константинов юлташ). Колхоз тӗштырӑсене агротехника енчен лайӑх пахалӑхпа 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

МУРКАШ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

28. Кутузов ячӗпе тӑракан колхоз (колхоз председателӗ Волков юлташ, комсомолӑн пуҫламӑш организаци секретарӗ Тихонов юлташ). Ҫак колхоз иртнӗ ҫулсенче юлса пынӑ, кӑҫал тӗштырӑсене пысӑк пахалӑхпа 8 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

29. «Красная Чувашия» колхоз (председателӗ Бочкин юлташ). Колхоз тӗштырӑсене 7 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Ҫӗрӗн пӗтӗм лаптӑкне ретӗн-ретӗн акнӑ.

30. «Броневик» колхоз (председателӗ Матвеев юлташ). Колхоз агротехника мероприятийӗсене пурнӑҫласа, тӗштырӑсене 9 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Ҫӗрӗн пӗтӗм лаптӑкне ретӗн-ретӗн акнӑ.

31. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Оньков юлташ). Колхоз 156 гектар тӗштырӑсене лайӑх пахалӑхпа, агротехника мероприятийӗсене пурнӑҫласа 8 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

Пысӑк тухӑҫлӑ кантӑршӑн

Кантӑр акмалли лаптӑк кӑҫал, иртнӗ ҫулсемпе танлаштарсан, чылай ӳсет. Кантӑр туса илес ӗҫ ҫине иртнӗ ҫулта Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Сӗнтӗр, Советски районсем кирлӗ пек пӑхмарӗҫ. Вӗсем государство планне тултараймарӗҫ. Чылай колхозсенче кантӑр акас, татса майлас тата шыва хутас ӗҫсене вӑхӑтра тумассӗ. Ҫакӑ вара кантӑр вӑрлӑхӗн тухӑҫне чакарать, лайӑх сӳс туса илме чӑрмантарать. Вӑхӑтра шыва хутман пирки кантӑр улӑмӗ ҫӗрсе пӑсӑлать, унӑн пахалӑхӗ те начар пулать. Иртнӗ ҫул кантӑра вӑхӑтра татса шыва хутман, е шыва хутнӑ пулсан та, вӑхӑтра тылласа сӳс туман тӗслӗхсем республикӑри колхозсенче нумай пулчӗҫ. Сӑмахран, Октябрьски районра 2.000 центнер, Сӗнтӗр районӗнче 4.300 центнер, Елчӗк районӗнче 2.100 центнер, Тӑвай районӗнче 1.100 центнер шыва хутман кантӑр улӑмӗ шутланать. Ҫавна пула вара чылай колхозсем государствӑна сӳс памалли плана тултараймарӗҫ.

Кантӑр акса тӑвассине хӑшпӗр районсем халь те кирлӗ пек хисеплемессӗ. Тӑвай, Шӑхасан, Чкаловски, Шӑмӑршӑ районӗсенчи хӑшпӗр колхозсенче ҫак вӑхӑта ҫитсе те кантӑр вӑрлӑхне тупса хатӗрлемен. Кантӑр акма вӑхӑт ҫитрӗ. Халӗ кашни колхозӑнах кантӑр вӑрлӑхӗ ҫителӗклӗ таран пулмалла.

Анчах та уйрӑм колхозсен председателӗсене кантӑр вӑрлӑхӗ ҫитменни питех кӳрентермест пулмалла. Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Канаш, Тӑвай тата ытти районсенчи колхозсене 700 центнер кантӑр вӑрлӑхӗ пама йышӑннӑ. Ҫак вӑрлӑха ытти тырӑсемпе улӑштарса илмелле. Вӑрлӑхлӑх кантӑра халех государство склачӗсенчен илсе каймалла.

Кантӑр акмалли плана тултарни тата кантӑр тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешни питӗ паха мероприятисенчен пӗри пулса тӑнине шута илсе, Чӑваш АССР Совнаркомӗ кантӑр акакан колхозсене агротехникӑна пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пыма, вӑхӑтра пухса илессишӗн кӗрешме хушса хӑварчӗ.

Пысӑк тухӑҫлӑ кантӑр туса илес тесен, кантӑр акакан вырӑна лайӑх сухаласа сӳрени кӑна мар, вырӑнти удобренисем ытларах тӑкни кирлӗ. Кантӑр акма уйӑракан ҫӗр чи лайӑх ҫӗр пулмалла. Кантӑр акмалли лаптӑксем шыв ҫывӑхӗнчи айлӑм вырӑнсенче пулсан аван.

Кашни колхозрах кантӑр туса илес тӗлӗшпе ятарласа звеносем тумалла. Ҫак звеносем вара акнӑ кунтан пуҫласа кантӑра пухса кӗричченех тата государствӑна кантӑр вӑрлӑхӗпе сӳсне парса татиччченех ӗҫлемелле. Колхозсемшӗн обязательнӑй поставка шучӗпе кантӑр вӑрлӑхӗ пани питӗ усӑллӑ. Государство 1 центнер кантӑр вӑрлӑхне 2 центнер тӗштырӑшӑн илет. Колхозниксене кантӑр сӳсне е тылламан кантӑр улӑмне кантӑр заводӗ патне турттарса пынӑшӑн тӳлемелли укҫа шутӗнчен 200 процент чухлӗ пусма тавар параҫҫӗ.

Парти, совет, хатӗрлев органӗсем, колхоз председателӗсем кӑҫал кантӑра чи лайӑх срокра акассишӗн, пысӑк тухӑҫлӑ кантӑр туса илессишӗн кӗрешме колхозниксен анлӑ массине мобилизацилемелле.

Н. МАЛЬЦЕВ,
«Заготлен» конторин управляющийӗ.

ПАХЧА-ҪИМӖҪ АКАҪҪӖ, САТСЕМ ӖРЧЕТЕҪҪӖ

ШӐХАСАН. (Хамӑр корр.). Атнашри Киров ячӗпе тӑракан колхоз ҫулсеренех сад-пахчинчен тата пахча-ҫимӗҫсенчен нумай тупӑш илет. Иртнӗ ҫулта ҫырласем сутса кӑна 56.000 тенкӗ тупӑш илнӗ.

Кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен ытларах тупӑш илес тесе, пахчара март уйӑхӗнчех хӗрӳ ӗҫ пуҫланнӑ. Ку уйӑхра пахчари мӗнпур парниксенчен ҫӳп-ҫапсене тасатса кӑларнӑ. Парниксем валли тислӗк, тӑпра хатӗрленӗ. Парниксене витме 140 улӑм кӗҫҫе ҫыхса хунӑ. Колхозра пахча-ҫимӗҫсем туса илес тӗлӗшпе ӗҫлеме ятарласа бригада тунӑ. Бригадӑн хӑйӗн хуҫалӑхӗ пур: лашасем, вӗсене хупма вите, конюхӗсем валли пӳрт, ут тавраш ӗсемпе транспорт инвентарӗсем валли лупасай пур.

Апрель уйӑхӗнче бригадӑри колхозниксем 47 рама чухлӗ помидор, 33 рама чухлӗ ирхи купӑста акнӑ. Халь вӗсем питӗ лайӑх калчаланнӑ. Бригадӑри колхозниксем чие ҫырли, хӑмла ҫырли, улма йывӑҫҫисем хушшинчи ҫӗре кӑпкалатнӑ. Улма йывӑҫҫисемпе ҫырла йывӑҫҫисем хушшине кишӗр, кӑшман, сухан лартнӑ, хура тул акнӑ.

Колхоз сад-пахчине ҫулленех пысӑклатса пырать. Кӑҫал ҫӗнерен улмуҫҫисем, груша йывӑҫҫисем 300 тӗп лартнӑ, шурӑ хурлӑхан, крыжовник йывӑҫҫисене 0,25 гектар валли питомнике хунӑ.

Кусемсӗр пуҫне сурхи ӗҫсене те бригада лайӑх туса пырать. Халӗ кишӗр 1,5 гектар, «Чернушка» ятлӑ сухана вӑрлӑхлӑх 0,5 гектар, ытти пахча-ҫимӗҫсене те 10 гектар акса хӑварнӑ, вӑрлӑх туса хатӗрлеме ятарласах пӗр гектар ҫимӗҫсем акнӑ.

Пахча-ҫимӗҫсене шӑварма шыв ҫителӗклӗ пултӑр тесе, кивӗ кӳлӗ тӗпне лайӑх тасатнӑ. Унта пулӑсем те янӑ.

С. ШАДИН.

* * *

Красноармейски районри Упири вӑтам шкулта вӗренекенсем иртнӗ кӗркунне шкул участокӗ ҫине 50 тӗп улмуҫҫи лартса хӑварнӑ. Кӑҫал суркунне комсомолецсемпе пионерсем тата 200 тӗпе яхӑн тӗрлӗ ҫимӗҫ йывӑҫҫисем лартса хӑвараҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех Степан Разин, Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсем те сад-пахчи ӗрчетеҫҫӗ. «Красный Борденер» колхоз кӑҫал 4 гектар ҫӗр ҫине сад-пахчи тӑвать. Лартмалли шӑтӑксене тата йывӑҫсене ҫителӗклӗ хатӗрленӗ.

К. МИХАЙЛОВ-РУСЬ.

Пысӑк тухӑҫлӑ хурт-хӑмӑр

Вӑрмар районӗнчи «Красная Кубня» колхозра юлашки ҫулсенче хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫ палӑрмаллах лайӑхланнӑ. Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче кӑна кунта хурт-хӑмӑр шутне виҫӗ хута яхӑн ӳстернӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех хурт-хӑмӑр продукцине илесси те ӳсех пырать. 1944 ҫулта кунта план тӑрӑх кашни вӗллерен 32 килограмм пыл илме пӑхнӑ. Пчеловод Ю. Бондарева хӑй ӗҫне пӗлсе тунипе пула кашни вӗллерен 44,2 килограмм пыл илнӗ.

Кӑҫал та хурт-хӑмӑра вӑхӑтра ирӗке кӑларнӑ, апат та ҫителӗклӗ пур. Суллахи вӑхӑтра ытларах пыл пухса илес шутпа утар ҫывӑхне пыл паракан курӑксемпе тырпулсем акаҫҫӗ. Пчеловод Ю. Бондарева юлташ кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен кая мар пыл туса илессишӗн тӑрӑшса ӗҫлет.

(Хамӑр корр.).

Истри, Триест тата Словени Приморьи пирки Кардель калани

БЕЛГРАД, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Югослави Министрӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ Эдвард Кардель Югославири телеграф агентствин корреспондентне вӑрӑм ответ панӑ, ҫав корреспондент Югослави ҫарӗсем Истрие, Триеста тата Словени Приморьине ирӗке кӑларнӑ май ыйту панӑ пулнӑ. Ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем, пуринчен ытла Итали хаҫачӗсем, Югославие хирӗҫ ҫырса тӑнине мӗнле ӑнлантарса паратӑн? тесе ыйтсан, Кардель ҫапла каланӑ: Истрие, Триеста тата Словени Приморьине Югослави ҫарӗ «хӑй ҫеҫ ирӗке кӑларчӗ». Ҫакӑн пирки генеральнӑй штаб начальникӗ Иванович генерал нумаях пулмасть сителӗклӗ авторитетлӑ тата уҫӑмлӑ каласа пачӗ. «Форма енчен пӑхсан,—тенӗ малалла Кардель,—ҫакӑ питӗ паллӑ: хӑй оккупациленӗ территори ҫинче Югослави ҫарӗн прависем вӑрҫӑра хӑшпӗр ют территорисене йышӑннӑ союзлӑ ҫарсен прависем пекех. Ҫакӑн ҫумне тата ҫапла каласа хурас пулать: ҫав территори пирӗншӗн ют территори мар, вӑл хамӑрӑн наци ҫӗрӗ пулса тӑрать, ӑна ӗлӗк Югославирен вӑйпа туртса илнӗ. Ҫапла вара, ҫав правӑсене моральпе политикӑллӑ шухӑшсем те ҫирӗплетсе параҫҫӗ», «Ют ҫӗршывсенчи хӑшпӗр хаҫатсем ҫакӑн пек элекле хыпарсем сараҫҫӗ,—тенӗ Кардель.

— Югослави, ҫав ҫӗрсене оккупацилесе, пӗтӗм тӗнчене пулнӑ факт патне илсе пырса тӑратасшӑн, теҫҫӗ. Ҫавӑн пек калани вӑл нихӑш енчен те, тӗрӗс мар». «Югослави,—тенӗ малалла Кардель,—мирлӗ конференцире ытти ҫӗршывсемпе калаҫма хатӗррине тата хӑйӗн чиккисем пирки требованисем кӑларса лартма унӑн право пуррине нихӑҫан та тунман. Ҫак тӗлӗшпе Югославин ҫав территорисем тӗлӗшпе йышӑннӑ позицийӗ ытти союзниксен хӑйсем оккупациленӗ территорисем тӗлӗшпе йышӑннӑ позицийӗнчен уйрӑлса тӑмасть. Ҫавӑнпа та Италипе Югослави хӑйсем хушшинчи чикӗ пирки каласса татӑличчен ҫав территорисенче тивӗҫлӗ йӗрке туса хумашкӑн тата вӗсене ура ҫине тӑратмашкӑн оккупациллӗ власть туса лартма Югослави ҫарӗн право пуррине йышӑнманни кулӑшла пулнӑ пулӗччӗ. Паллах ӗнтӗ, ҫак енчен пырса пӑхсан, Итали хаҫачӗсем тата тепӗр ҫӗршыври хаҫатсем, Итали хаҫачӗсене пулӑшса тӑракансем, Югославие хирӗҫ кампани пуҫласа яма сӑлтав тупма пултараймаҫҫӗ. Кардель шухӑшӗпе, ҫав кампанире икӗ ятпала палӑрать: пӗр енчен— Италири хӑшпӗр ҫынсем тата вӗсен реакциллӗ союзникӗсем ҫӗнӗ Югославие хирӗҫ тахҫанах кампани пуҫласа янӑ. Мӗншӗн тесен вӗсем ҫакӑ Итали империализмне тепӗр хут ура ҫине тӑратмалли пӗртен пӗр май пулса тӑрать, тесе шутлаҫҫӗ. Тепӗр енчен, ҫӗнӗ Югославин ытти ҫӗршывсенче те тӑшмансем пур. Вӗсем Югославири мӗнпур халӑхсене ирӗке кӑларасшӑн мар. Ҫавӑнпа вӗсем Италирен тытса илекен колонисем вырӑнне ӑна Словенипе Хорвати ҫӗрӗсене пама сӗнеҫҫӗ. «Паллах ӗнтӗ, Итали колонийӗсенчи халӑхсене часрах ирӗке тухма май парассине хирӗҫ эпир нимӗн те каламастпӑр. Анчах эпир ҫакна ниепле те ӑнланса илейместпӗр: Юлийски Крайнӑра пурӑнакан словенсемпе хорватсем Африкӑри йӑхсенчен мӗнпе начартарах-ши, мӗн пирки вӗсене напи енчен каллех чуралӑха кӗртсе ярса асаплантармалла-ши? Ҫак вӑрҫӑра вӗсем, союзниксен енче ҫапӑҫса, питӗ пысӑк жертвӑсем тӳсрӗҫ вӗт».

«Паллах,—тенӗ Кардель—Югославие хирӗҫ пыракан ҫав кампани хыҫӗнче демократипе вак халӑхсен ирӗклӗхӗн тӑшманӗсем тӑраҫҫӗ. Вӗсем Европӑра фашистла йӗркен юлашкийӗсене тӗппипех пӗтерсе тӑкасшӑн мар».

Корреспондент—Истрире тата Словени Приморьинче хальхи вӑхӑтра ӗҫсем мӗнле пыраҫҫӗ? тесе ыйтсан, Кардель ҫапла каланӑ: унта ҫар влаҫӗсӗр пуҫне тата гражданла власть ӗҫлет; ҫав власть—халӑхӑн ирӗклӗх комитечӗсем: вӑл комитетсене оккупаци вӑхӑтӗнчех туса хунӑ. Вӗсем халӑхӑн оккупантсене хирӗҫ пыракан кӗрешӗвне ертсе пынӑ. Триестра тата Горицӑра, ҫав хуласемпе пӗрлешсе ларнӑ ялсене шута илмесен, пуринчен ытла итальянецсем пурӑнаҫҫӗ. Паллах ӗнтӗ вӗсем гражданла влаҫсен органӗсенче те ытларах пай пулса тӑраҫҫӗ. Халӑха ирӗке кӑларасшӑн пыракан кӗрешӳ пуҫланнӑранпах тытса пына тавӑпах, пӗрлӗх тата пӗртанлӑх политики ҫакӑн пирки пӗртте иккӗлентермест: Югослави тивӗҫ хӗрринчи хуласенчи итальянецсен прависем ҫине Югославири ытти халӑхсен прависем ҫине пӑхнӑ пекех тимлӗн те хисеплӗн пӑхӗ. Малалла Кардель ҫапла каланӑ: Югославин хӑйӗн облаҫӗсене ҫеҫ хӑйне пама ыйтать. «Эпир ют ҫӗрсене илесшӗн мар, хамӑрӑн халӑхсем пурӑнакан ҫӗрсене ҫеҫ илесшӗн. Югослави тулашӗнче Югослави халӑхӗн 10 процентне яхӑн юлнӑ. Пӗр словенсем ҫеҫ те Югослави тулашӗнче, чи малтан Италире, 35 процент ытла юлнӑ. «Ҫак вӑрҫӑ Югослави халӑхӗсем тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑ хыҫҫӑн тунӑ тӗрӗсмарлӑха тӳрлетесшӗн пулса хутшӑнчӗҫ, ҫакӑ вӑл тӗп тӗллевсенчен пӗри пулчӗ». Унтан Кардель ҫапла каланӑ: Триестпа Горицӑна вӑйпа туртса илнӗ. Напи интересӗсемпе экономика интересӗсем ҫеҫ мар Триеста Югослави аллине пама хушаҫҫӗ. «Триест пирки тӑракан ыйту вӑл Югославипе Вӑтам Европӑшӑн мир туса хурасси пулса тӑрать. Итали захватчикӗсемшӗн Триест Балкана тата Вӑтам Европӑна каймалли хапха пулнӑ. Вӑтам Европӑпа Балканри пӗр халӑх та Итали империализмне Триестпа усӑ курса Европӑн ҫав пайӗнче мире хирӗҫ ӗҫлеме май парасшӑн пулас ҫук. Италире фашизмӑн юлашкийӗсене пӗтерсе тӑкас мар тесен ҫынсем кӑна итальянецсен Югославие хирӗҫ пыракан фашистла кампанине пулӑшса тӑма пултараҫҫӗ». «Анчах та ҫакӑ вӑл,—тенӗ малалла Кардель,—Югослави хӑйпе Итали хушшинчи ҫыхӑнусене туслӑн татса парасшӑн пулманнине пӗлтермест. Эпир Итали халӑхӗн демократиллӗ вӑйӗсене ӗненетпӗр». Унтан Кардель ҫакна палӑртнӑ: Триест хулине Югослави аллине пама «словенц халӑхӗ ҫеҫ мар, ҫав хулари итальянецсен пысӑкрах пайӗ те ыйтать». Триестри итальянецсем Югославин ирӗклӗх ҫарне темиҫе бригада доброволец пухса пачӗҫ». Юлашкинчен, Кардель ҫапла каланӑ: «Приморьере Югославипе союзниксен ҫарӗсем пӗр-пӗринпе туслӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ тата союзниксен ҫарӗсем ҫав районсенче Югославин тылри, ҫар тата гражданла влаҫӗсемпе те сума суса ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

СССР ПОСОЛНЕ Ф. Т. ГУСЕВА ХИСЕПЛЕСЕ У. ЧЕРЧИЛЛЬ ПРЕМЬЕР-МИНИСТР ПАТӖНЧЕ ПУЛСА ИРТНӖ ИРХИ АПАТЛАНУ

ЛОНДОН, майӑн 18-мӗшӗ. (ТАСС). У. Черчилль премьер-министр, Совет Союзӗн Лондонри посолне Ф. Т. Гусева тата унӑн арӑмне хисеплесе, паян ирхи апатлану туса ирттернӗ. Ирхи апатланура Англин Мускаври посолӗ А. Кларк Керр пулнӑ.

АФИНӐРА СУТӐНЧӐКСЕНЕ СУД ТУНИ

АФИНЫ, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Майӑн 12-мӗшӗнче Грецири пуканелле «премьерсен» Раллисӑн, Чолакоглун тата нимӗҫ оккупанчӗсене пулӑшакан ытти тӗп сотрудниксен судӗнче Пападакис прокурор айӑплакан сӑмах тухса каланӑ. «Оккупаци вӑхӑтӗнче,—тенӗ вӑл,—захватчиксене хирӗҫ пынӑ аслӑ кӗрешӳ вӑхӑтӗнче халӑх хӑйне сутнӑ ҫынсене ҫӗршыва ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн ҫийӗнчех пӗр хӗрхенӳсӗр наказани парассине шансах тӑнӑ. Анчах ултӑ уйӑх иртрӗ пулин те, ҫӗршыва тасатса ҫитереймен-ха».

Раллиспа унӑн таврашӗнчи ҫынсем сутӑннӑ тӑшманӑн сӑн-сӑпатне кӑтартас тесе, прокурор оккупантсен тискерлӗхӗсемпе вӗсем кӳрсе хӑварнӑ сӑтӑрсем ҫинчен калакан цифрӑсене вуласа панӑ. Оккупантсем 10.000 ҫынна персе пӑрахнӑ, 70.000 сурта ишӗлтернӗ е ҫунтарса янӑ, 883 яла пӗтерсе тӑкнӑ. «Ҫаксем хыҫҫӑн ӗнтӗ—тенӗ, прокурор,—айӑпланаканнисем халӑха захватчиксене шеллемешкӗн чӗнсе каланӑ».

Пуканелле правительсем оккупантсемпе тунӑ экономика договорӗсем оккупантсем ахаль те ҫаратнисене «законлӑ йӗркене» кӗртни ҫеҫ пулнӑ, тесе палӑртнӑ прокурор. Раллисӑн «сыхлав батальонӗсем» тата вӑл тунӑ «хӑрушсӑрлӑх» органӗсем «йӗркелӗхе сыхлама» тесе тунӑскерсем, чӑннипе оккупантсене хирӗҫ тӑрассине пӗтерсе пынӑ, партизансене хирӗҫ кӗрешнӗ. «Сыхлав батальонӗсем» нимӗҫсемпе пӗрле ҫапӑҫнӑ, ҫапла вара, тенӗ прокурор, вӗсем е грексен е тӑшманӑн вӑйӗ пулса тӑни ахалех паллӑ. «Ҫав батальонсем халӑха вӗлернишӗн, халӑхран мӑшкӑлланишӗн вӗсене организацилекенсем ответ тытмалла».

Юлашкинчен прокурор: Раллис, Чолакоглу, Логофатопулос тата айӑпланаканнисем ыттисем те тӑшман патӗнче ӗҫлесе тата ун майлӑ пропаганда туса ҫӗршыва сутнишӗн айӑпланма тивӗҫлине кӑтартса панӑ, тесе палӑртнӑ.

«Элефтери Эллада» ятлӑ хаҫатра прокурорӑн сӑмахӗ ҫинчен ҫапла ҫырнӑ: сутӑнчӑксемпе сутӑнчӑклӑха мухтанин атмосферинче, судра пуҫпулса тӑраканскерӗнче, юлашкинчен напин чӑн-чӑн сассийӗ илтӗнчӗ, тенӗ.

Судра хӳтелекеннисен сӑмахӗсене итлеме пуҫланӑ. Хӳтелекеннисенчен пӗри ҫапла каланӑ: «Грецире халь король пулнӑ пулсан, айӑпланаканнисене вӑл тахҫанах каҫарнӑ пулӗччӗ», тенӗ.

ЛӐПКӐ ОКЕАН ҪИНЧИ ВӐРҪӐ

ЛОНДОН, майӑн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен Лӑпкӑ океанӑн кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен пӗрлешӳллӗ командованийӗн штабӗ ҫапла пӗлтерет: Минданао утравӗн вӑтасӗрти пайӗнче Америка ҫарӗсем 6 миля малалла кайнӑ та Валенсиа хули тулашне пырса ҫитнӗ. Луссон утравӗ ҫинче американецсем японецсен самаях пысӑк вӑйӗсене ҫаварса илнӗ. Таракан ятлӑ утравӑн хӗвелтухӑҫ хӗрринче Австрали ҫарӗсем малалла кайнӑ.

Борнео утравӗ ҫинче Баликпапан районӗнче Америка самолечӗсем 15 ҫар склачӗ пӗтерсе тӑкнӑ, ҫавӑн пекех тата Японин верфӗсене атакӑланӑ.

ВАШИНГТОН, майӑн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Лӑпкӑ океан ҫинчи флочӗн штабӗ официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: Америка ҫарӗсем Окинава утравӗн тӗп хули пулса тӑракан Наха хулине кӗрсе кайнӑ. Американецсен ытти чаҫӗсем Ионабар патнелле куҫса пыраҫҫӗ.

Авианосецсем ҫинчен вӗҫсе улӑхнӑ Англи самолечӗсем Сакисима тата Рюкю утравӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

ИТАЛИН ПОЛИТИКА ДЕЯТЕЛӖСЕМ МИЛАНА КАЙНИ

РИМ, майӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Паян ирхине Милан хулине ҫак политика деятелӗсем вӗҫсе кайнӑ: Министрсен совечӗн президиумӗнчен—Бономи тата Спатаро, коммунистсен партийӗнчен—Тольятти тата Скоччимарро, либералсен партийӗнчен — Брози тата Солери, христианла демократсен партийӗнчен — де Гаспери тата Гронки, «Ӗҫ демократийӗ» ятлӑ партирен—Руини тата Чеволотто, социалистсен партийӗнчен—Ненни тата Солари, «Ӗҫлев партийӗнчен»—Луссу тата Ламальфа. Римра Бономи ҫук чухне ун вырӑнне унта Министрсен совечӗн вице-председателӗ Родино ӗҫлесе тӑрать.

ТӲРЛЕТНИ

Перекет кассинчи вылявлӑ вкладсен выигрышӗсен таблицинче, «Чӑваш Коммуни» хаҫатра майӑн 9-мӗшӗнче пичетленсе тухнӑскерте, 349 вырӑнне 439 тесе вуламалла.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

МАЧЕК ЗАГРЕБ ХУЛИНЧЕН ТАРНӐ

БЕЛГРАД, майӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). «Борба» ятлӑ хаҫат Загреб хулинчен илнӗ хыпарсем тӑрӑх ҫапла пӗлтерет: Хорватири хресченсен партийӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ Владимир Мачек Павеличпа тата унӑн шайкипе пӗрле, Загреб хулине Югослави ҫарӗн чаҫӗсем кӗрес умӗн, унтан тухса тарнӑ.

АМЕРИКӐРИ ХАҪАТСЕМ ВӐРҪӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕМ ҪИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, майӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн корреспонденчӗ Парижран ҫапла пӗлтерет: союзниксем Германин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене демобилизациленӗ ҫӗрте Германин верховнӑй командованийӗпе усӑ курни—Германире пуҫпулса тӑнӑ ҫынсем Германин ҫар командованине тӳрре кӑларма, ӑна вӑрҫӑ пуҫласа янӑшӑн ответ тытассинчен пӑрса хӑварма тата влаҫа ун аллинче хӑварма тӑрӑшнине пулӑшать. Союзниксем ҫакӑн пек тунипе нимӗҫсем хӑйсен авторитетне хӑпартас ӗҫре усӑ кураҫҫӗ. Германин фельдмаршалӗ Буш Германин ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайне, союзниксем килӗшнӗ тӑрӑх, контроль туса тӑма хӑй ҫине илме шутлани ҫинчен Фленсбургран радиопа пӗлтернисӗр пуҫне, Германи тактикине кӑтартса паракан тата тепӗр икӗ тӗслӗх пур. Германин Норвегири ҫарӗсен командующийӗ пулнӑ Фалькенхорст генерал-полковник хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла каланӑ: Германин генеральнӑй штабӗ Германи вӑрҫӑра ҫӗнтерме пултарас ҫуккине ялан пӗлсе тӑнӑ, тенӗ. Германи радиообозревателӗ пулнӑ Дитмар генерал-лейтенант, ӗлӗк тӑтӑшах Германин верховнӑй командованийӗ ячӗпе тухса калаҫнӑскер, сӑмах ҫырса хатӗрленӗ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл вӑрҫӑ пуҫласа янӑшӑн нацистсен партине ҫеҫ айӑплать, Германин Верховнӑй командованине тӳрре кӑларма тӑрӑшать.

«П. М.» хаҫатра карикатура пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав карикатурӑра Германи генералне, промышленникне тата бюргерне, вилесен кӑкӑрӗсем ҫинче тӑрса пуринишӗн те пӗр Гитлера ҫеҫ айӑплаканскерсене, сӑнласа кӑтартнӑ.

«Нью-Йорк таймс» хаҫат ҫапла ҫырать: вӑрҫӑ пуҫласа яраканнисен судне «пӗрле, хӑвӑрт организацилемелле, тивӗҫлипе айӑпласа тата тӗплӗн туса ирттермелле... Пӗтӗм тӗнчери халӑхсем хушшинче тӗрӗслӗх сисӗмӗ сыхланса юлтӑр тесен, вӑрҫӑн ҫак преступникӗсене суд тӑвасси чи кирлӗ ӗҫ пулса тӑрать», Американецсем Геринга тыткӑна илнӗ хыҫҫӑн ӑна юратуллӑн йышӑнни тата вӑл хӑйне хӑй сӗмсӗррӗн тӳрре кӑларма хӑтланни халӑха килӗшмерӗ. «Кунсӑр пуҫне, хӑйсене хӑйсем тӳрре кӑларма тӑрӑшакан Германи генералӗсемпе адмиралӗсем те, цивилизациллӗ общество вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗсене чарасси ҫинчен тунӑ мӗнпур килӗшӳсене пӑсакансем те пур».

ВӐРҪӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕНЕ МӖНЛЕ ТЫТКАЛАССИ ҪИНЧЕН АНГЛИ ХАҪАЧӖСЕМ МӖН ҪЫРАҪҪӖ

ЛОНДОН, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Германин тыткӑна лекнӗ паллӑ ҫар ҫыннисемпе преступникӗсене мӗнле тыткаласси ҫинчен Англи хаҫачӗсем пӑшӑрханса ҫыраҫҫӗ. Эйзенхауэрӑн нацистсен лидерӗсем ҫине «хисеплӗ тӑшман» ҫине пӑхнӑ пек пӑхма чаракан приказӗ те хаҫатсене лӑплантарайман. Геринг хӑйне кирлӗ мар ҫӗртен кӳрентернӗ пек каланӑ чухне ӑна ӳкерсе илнӗ фотоӳкерчӗксем нумай пичетленсе тухнӑ.

«Ньюс кроникл» хаҫат Фленсбургри лару-тӑру ҫинчен асӑрхаттарать. Дениц унта тинӗс-ҫар казармисенче пурӑнать, ӑна Германи хуралӗ ҫеҫ хуралласа. Дениц хӑш чухне хӑй тӑвас тенӗ пек те тума пултарать.

Савӑнӑҫлӑ тӗлпулу

Совет Союзӗн Геройӗ майор Ф. Н. Орлов „Красное Сормово" колхозра

Майӑн 16-мӗш кунӗнче хӑйсем патне Совет Союзӗн Геройӗ майор Федот Орлов килмелле тенӗ хыпара илтсенех, Оринкинӑри колхоз правленийӗ умне темӗн чухлӗ халӑх пуҫтарӑнчӗ. Ҫамрӑксем, хӗрсем, кӑвак сухаллӑ старниксемпе карчӑксем, шкул ачисем...

Нумаях та вӑхӑт иртмест, ҫӑмӑл автомашина, Шупашкар аслӑ ҫулӗ ҫинчен ку еннелле пӑрӑнса, Оринкино ялне ҫул тытать. Шкул ачисемпе ҫамрӑксем хаклӑ хӑнана хирӗҫ тухса илме уйхаппи патне вӗҫтереҫҫӗ. Акӑ, ҫӑмӑллӑн кӑна ярӑнса, автомашина колхоз правленийӗ умне ҫитсе чарӑнчӗ. Машина ӑшӗнчен колхоз председателӗ П. Н. Майковпа майор Орлов тухаҫҫӗ.

— Ну, тӑванӑмсем, хаклӑ хӑнана кӗтсе илтӗмӗр,—тет Майков юлташ.—Ку вӑл—хамӑр илсе панӑ самолетпа тӑшмана аркатса Ҫӗнтерӳ илсе килнӗ паттӑр Герой...

Петр Николаевич Майков куҫӗсенче савӑнӑҫ куҫҫулӗсем йӑлтӑртатаҫҫӗ. Вӑл Геройӑн аллине хыттӑн-хыттӑн чӑмӑртать. Район представителӗсемпе колхоз ҫыннисем Федот Никитич Орлова ӑшшӑн саламласа ырӑ сунаҫҫӗ. Чаплӑ летчикӑн хӗвел пек ӑшӑ куллипе халӑх чӗрине сурхи ӑшӑ ҫил евӗр хумхатса тӑрать.

Совет Союзӗн Геройӗ Ф. Н. Орлов килнӗ ятпа пухӑннӑ митинга Муркаш райкомӗн секретарӗ Ильин юлташ уҫрӗ. Трибуна ҫине, сарлака кӑкӑр тулли орденсемпе медальсене ҫутӑлтарса, майор Орлов тухса тӑрать. Хӑйне ҫав тери хапӑл туса кӗтсе илнишӗн хумханса, вӑл пӗр самант хушши нимӗн каламасӑр тӑрать. Унтан лӑпкӑ сасӑпа хӑй сӑмахне ҫапла пуҫласа ярать:

— Хаклӑ юлташсем! Аслӑ ҫӗршывӑн мухтавлӑ патриочӗсем! Халӗ эпир чаплӑ ҫӗнтерӳ уявне уявлатпӑр. Тӗнче хуҫи пулма ӗмӗтленнӗ фашистла Германи арканчӗ. Юнлӑ Гитлерӑн вӑрӑ-хурахла шайккине эпир тӗппипех ҫапса салатрӑмӑр. Анчах та ҫак чаплӑ ҫӗнтерӗве эпир, Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем, пӗтӗм халӑх пулӑшнипе, тылри паттӑрсем ырми-канми ӗҫленипе кӑна тума пултартӑмӑр. Сире эпӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче мухтава тивӗҫлӗ ӗҫленӗшӗн, хамӑр Тӑван Хӗрлӗ Ҫара икӗ боевой самолет парнеленӗшӗн, тӑшмана аркатма ӗҫпе те, укҫа-тенкӗпе те пулӑшса пынӑшӑн чунтан тав туса саламлатӑп...

— Хӑш патшалӑхра тупма пулать-ши урӑх пирӗн тӑван ҫӗршыври пек паттӑр халӑха? Мӗнле патшалӑхра курма пулать хресченсем хӑйсен тӑван ҫӗршывӗн тӑшманӗсене ҫӗнтерме ҫапла массӑллӑн самолетсем, танксем илсе панине? Ку вӑл пирӗн Совет Союзӗнче кӑна пулма пултарать, мӗншӗн тесен Совет ҫӗршывӗ — ирӗклӗхпе телей ҫӗршывӗ, халӑхсен туслӑхӗпе тӑванлӑх ҫӗршывӗ. Ҫавӑнпа та эпир хамӑр ҫӗршывӑмӑра пурсӑмӑр та пурнӑҫпа юна хӗрхенмесӗр сыхлатпӑр. Пире парти ҫапла пӑхса ӳстернӗ. Сталин атте ҫапла вӗрентсе ҫитӗнтернӗ. Мухтав аслӑ Сталина!

— Тӑван халӑхӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн эпӗ мӗн вӑйӑм ҫитнӗ таран ҫапӑҫса Герой ятне илме тивӗҫ пултӑм. Ку вӑл—урӑхла пулма та пултараймасть. Мана совет влаҫӗ вӗрентсе ҫын тунӑ, ҫавӑнпа эпӗ кирек те епле йывӑр вӑхӑт килсе тухсан та, начар ҫапӑҫма пултарайман. Эпӗ малашне те хамӑн ӗҫӗмсене начар тумӑп. Чӑваш халӑхне маншӑн нихӑҫан та вӑтанса хӗрелме тивмӗ. Эсир те, тӑвансем, хӑвӑр мухтавлӑ ятӑра ан ярӑр, хуҫалӑхӗнчи ӗҫсене вӑхӑтра, пысӑк пахалӑхпа туса пырӑр. Вара сирӗн пирки те пире хӗрелмелле пулмӗ...

Ҫапла калать майор Орлов.

Трибуна ҫинче патриот Петр Николаевич Майков, хӑйӗн укҫипе Ф. Н. Орлов валли йывӑр бомбардировщик илсе панӑскер. Вӑл ытлашши нумаях каласа тӑмасть, анчах унӑн чӗре ҫумӗнчи шухӑшӗсем сӑмахсӑрах та паллӑ.

— Федот Орлов пирӗн халӑхӑн чи юратнӑ Геройӗ. Ун ҫинчен халӑх хушшинче юмах-халапсем ҫӳреҫҫӗ, унӑн ятне сӑвӑ-юрӑсемпе мухтаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та эпӗ хам самолета паттӑр Орлова парнелерӗм. Вӑл чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ, манӑн тӑван ывӑлӑм...

Майков юлташ Орлова тӑван ашшӗ пек ыталаса чӑмӑртать.

Ун хыҫҫӑн митинга пуҫламӑш парторганизацин секретарӗ Ксения Григорьева саламлӑ сӑмах каларӗ. Райком секретарӗ митинга хупать, анчах халӑх ҫаплах саланмасть-ха.

Майор Орлов ячӗпе колхоз чаплӑ апатлану туса ирттерчӗ. Унта ҫамрӑксем хӑйсен вӑйӑ-ташӑ пултарулӑхне кӑтартса пачӗҫ. Орлов юлташ колхозниксемпе питӗ ӑшшӑн уйӑрӑлчӗ, республика уявне иртернӗ чух, Майков илсе панӑ самолетпа вӗҫсе килсе, Оринкино ҫыннисемпе тепӗр хут курнӑҫма сӑмах пачӗ.

Илья ТУКТАШ.
Н. ДАНИЛОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретарӗн — 4—23, парти пурнӑҫ пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

00118 Типография № 1 Управл. полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000